Ак эп пурăнатăп, ӳсетĕп, ĕçлетĕп,
Пултарнă таран сăвăсем кĕвĕлетĕп.
Тӳрех пурнăçа куçĕнчен эп пăхатăп,
Ăна хам ура йĕррине пусма памăп!

Эп вăрçăллă çак пурнăçпа. Анчах эпе
Писмен-ха унран, тăрантман вăл
мана:
Çук! Сывлăш тухми пуличчен, кун
хисепĕ
Иăлтах пĕтиччен эп юратăп ăна!

Ак, калăпăр, мăйкăч мăя
йăлмаклатăр,
„Тата пĕр сехет пурăнатни?“ тесе
Ыйтсассăн манран, эпĕ кăшкăрăп:
„Салтăр!
Вĕçерĕр часрах кантрăра, ирсĕрсем!“

Эп темĕн те тăвăттăм пурнăсç
пурнасшăн
Çĕкленĕттĕм çĕн машшинпа пĕлĕте,
Ракета ăшне кĕрĕттĕм эп хавассăн,
Çĕн çăлтăр тупма вĕçĕттĕм инçете.